# Килĕштерсе ĕçлесен, ăнăçу пулатех

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Муркаш почтамтĕнче ĕçлекен Алевтина Аркадьевна Якимова, Зоя Алексеевна Кузнецова, Мария Васильевна Никитина почтальонкăсем кунсеренех районта пурăнакансем патне çĕнĕ хыпарсем вăхăтра çитереççĕ.

Телефон çыхăнăвĕпе тата Интернет çыхăнăвĕн пахалăхне ӳстерессипе те нумай ĕçсем туса ирттернĕ. Вырнаçтарнă телефонсен шучĕ 4356 çитрĕ, Интернетпа çыхăнтарнă абонентсем 203. 2007 çулта 8 АТСа цифрăлллă АТС çине куçарнă. Вĕсем халь 10-на çитрĕç. Линипе техника цехĕн ертӳçине Виктор Александрович Терехина тата электромеханикне Зоя Аверкиевна Воробьевана тав сăмахĕ калас килет.

**– Çĕнĕ çуртсем, çулсем тăвасси те районта тĕп вырăнта. Çакна цифрăсем те çирĕплетсе пачăр.**

– Иртнĕ çул инвестицисемпе 521,0 млн. тенкĕлĕх усă куртăмăр. Инвестицисен пĕтĕмĕшле калăпăшĕпе тĕп капитал 521,0 млн. тенкĕпе танлашрĕ. Ку вăл виçĕм çулхинчен 47 процент чухлĕ пысăкрах. Социаллă ипотека кредитне пĕлтĕр пурĕ 6 çемье 1926,0 пин тенкĕлĕх илчĕ. 9 çемье «Çурт-йĕр» федераллă программăпа тавăрса памалла мар субсидипе 3234,5 пин тенкĕлĕх усă курчĕ. «Ялсене 2010 çулччен социаллă аталантарасси» федераллă программăпа ялта пурăнакан 7 хуçалăх çурт лартма пĕтĕмпе 1230,0 пин тенкĕлĕх тавăрса памалла мар субсиди илчĕ. Асăннă программăпа тепĕр 9 çамрăк çемьепе çамрăк специалист 4036, 7 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне илчĕ.

Иртнĕ çул пурĕ 30,8 пин тăв. метр чухлĕ пурăнмалли çурт хута янă. Ку вăл 2006 çулхинчен 14,5 процент ытларах. 2007 çулта автомобиль çулĕсене 27,5 км чухлĕ тунă тата юсанă. Кăçал вара 19 ял патне автомобиль çулĕсене 23,5 км чухлĕ тумалла, çавăн пекех 41,6 км чухлĕ автомобиль çулĕсене юсамалла.

Уйрăмах хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организаци строителĕсем (ертӳçи – Владислав Николаевич Семенов): Геннадий Егорович Петров каменщик, Петр Алексеевич Аргандеев автокран машинисчĕ, Илья Геронтьевич Федотов экскаватор машинисчĕ, Алексей Владимирович Игнатьев мастер тав сăмахне тивĕç. Çавăн пекех «Моргаушавтотехсервисри» (ертӳçи – Леонид Дмитриевич Дмитриев) Владислав Валерьянович Николаев столяра, Тамара Васильевна Николаева штукатур-маляра, Арист Семенович Герасимов электрогазосварщика, Геннадий Октябристович Григорьев столяра ырăпа асăнса хăвармалла.

Çавăн пекех ман паян хамăр районпа тачă çыхăнса çул-йĕр тăвас енĕпе ĕçлекен «Волгодорстрой» акционерсен уçă обществин (ертӳçи Константин Кириллович Жарков), «Дорстрой» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн (ертӳçи Владимир Александрович Румянцев), «Чувашавтодор» патшалăх унитарлă предприятин (ертӳçи Владимир Михайлович Осипов) коллективĕсене тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăвас килет.

**– Вĕрентӳ сферинче пулса иртекен ырă улшăнусене кашниех асăрхать ĕнтĕ. Çакăн çинчен кĕскен чарăнсан аванччĕ.**

– «Вĕрентӳ» наци проекчĕ районта малалла пурнăçа кĕрсе пырать.

Инновациллĕ вĕрентӳ программисене пурнăçа кĕртнĕшĕн Москакассипе Нискасси шкулĕсем РФ Президенчĕн премине 1 млн. тенкĕ тивĕçрĕç. Муркашри вăтам шкул вара Чăваш Республикин Президенчĕн грантне – 200 пин тенке тивĕçрĕ. Йӳçкассинчи вăтам шкулта ачасене историпе обществознани вĕрентекен Владислав Иванович Тихонов РФ Президенчĕн премине – 100 пин тенке, «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ Оксана Валерьевна Прокопьева Чăваш Республикин Президенчĕн грантне – 10 пин тенке тивĕçрĕ.

Класс ертӳçисен ятне-сумне ӳстерес тĕллевпе районта «Чи пултаруллă класс ертӳçи» конкурс ирттернĕ. Республика шайĕнче иртнĕ çак конкурсра Калайкассинчи вăтам шкулти 10 класс ертӳçи Татьяна Аркадьевна Ершова çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Пултаруллă çамрăксене тата вĕренекенсене пулăшас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине çирĕплетнĕ. Ăна çулсерен 100 отличник илсе тăрать.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче пурĕ 324 компьютер. Урăхла каласан, 13 ача пуçне пĕр компьютер тивĕçет. Вĕрентӳ учрежденийĕсен сечĕсен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕллевпе пĕлтĕр района 3 шкул автобусĕпе пĕр микроавтобус илсе килнĕ. Паян районĕпе ачасене шкула 13 шкул автобусĕ турттарать. Вĕрентĕве çĕнетмелли комплекслă проекта пурнăçа кĕртнĕшĕн района шкулсене тĕплĕ юсама тата кулленхи юсав ĕçĕсене туса ирттерме 3052,0 пин тенкĕ уйăрнă. Пур шкул та пĕрремĕш классем валли 559,3 пин тенкĕлĕх сĕтел-пукан илчĕ, çавăн пекех 1854,0 пин тенкĕлĕх библиотекăсем валли вĕрентӳ тата илемлĕ литература илсе килнĕ.

**– Чи хакли çыншăн – сывлăх. Ку енĕпе районти медицина ĕçченĕсем сахал мар тăрăшаççĕ. Шурă халатлă сывлăх хуралçисен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен мĕн калана пулăттăр?**

–Сывлăх пулсан ĕçлес те килет, ĕç те ăнать. Кун пек чухне халăх пуянлăхĕ те хушăнсах пырать, пурнăç шайĕ те ӳссех пырать. Сывлăха сыхлас ĕç сферинчи приоритетлă наци проекчĕ пурнăçа кĕни вара шăпах çак отрасльти пысăк ырă улшăнусен пĕрремĕш тапхăрĕ пулса тăчĕ.Çакă халăх сывлăхне çирĕплетес ĕçре пысăк утăмсем тума май пачĕ, çынсем чирлесси, инвалида тухасси, вилесси чакрĕ, демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру палăрмаллах лайăхланчĕ. Халăх сывлăхлă пулнине çакă та çирĕплетсе парать: ачасем çураласси ӳсрĕ. 2006 çулхипе танлаштарсан, пĕлтĕр районта 60 ача ытларах – пĕтĕмпе 426 ача çуралчĕ. Шел пулин те, çынсем вилесси те кăштах ӳсрĕ. Уйрăмах вăй питти арçынсем вилеççĕ: инкексенче, наркăмăшланса, сусăрăнса. Иртнĕ çул тĕрлĕ сăлтавсемпе 686 çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Кашни çын медицина пулăшăвĕпе усă курма пултартăр. Паянхи куна районта пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсем 7, 38 фельдшерпа акушер пункчĕ, участокри тата 2 тĕп больница. Ĕç укçине ӳстерсе пани врачсене хавхаланса ĕçлеме май парать. Амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсен пурлăхпа техника бази те палăрмаллах çирĕпленчĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçре ырми-канми вăй хунăшăн районта пурăнакансем паян районти тĕп больницăри (тĕп врачĕ – Владислав Григорьевич Данилов) хирурги уйрăмĕн ертӳçине Геннадий Мефодьевич Огурцов хирурга, Нина Артемьевна Лобачева акушер-гинеколога, Леонид Николаевич Андреев хирург-травматолога, Иван Михайлович Ярдыков врач-анестезиолога, Светлана Григорьевна Гусак врач-оториноларинголога, районти тĕп больницăри хирурги уйрăмĕн медсестрине Альбина Николаевна Крылована, кунти поликлиника медсестрине Светлана Алексеевна Исаевана, Мăн Сĕнтĕр больницинчи (тĕп врачĕ Леонид Иванович Самушков) Юрий Михайлович Трофимов врач-невропатолога, Владислав Александрович Прокопьев хирурга, Çуткӳлти тата Тивĕшри фельдшерпа акушер пункчĕсен ертӳçисене Валентина Петровна Егоровапа Наталья Гавриловна Дмитриева фельдшерсене, Вăрманкассинчи фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерне Людмила Алексеевна Касеевана чун-чĕререн тав тăваççĕ. Çакна та палăртма кăмăллă. Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнчи Владимир Михайлович Басяев врач ĕç опычĕпе хамăр республикăри медицина ĕçченĕсем çеç мар, Раççей Федерацийĕнчи ĕçтешĕсем те кăсăклансах тăраççĕ. Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн ертӳçи Валентина Николаевна Любимова «2007 çулхи хĕрарăм-директор» республикăри конкурсра çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, Мускавра иртекен Пĕтĕм Раççейри конкурса хутшăнма тивĕç пулчĕ.



Пирĕн адрес: Муркаш ялĕ, Парк урамĕ.

**– Районта спорт мĕнле аталанать?**

– Районта физкультурăпа спорта аталантарассине, спорт шкулĕсен сечĕсене аталантарассишĕн вырăнсенче физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли тата çул çитмен çамрăксен спорт клубĕсене тăвассине пысăк тимлĕх уйăратпăр.

2007 çулта массăллă разрядлă 2618 спортсмен хатĕрленĕ, 1 разрядлă спортсменсем 7, тепĕр иккĕн Раççей спорт мастерĕн кандидачĕсем. Спорт секцийĕсене, вĕрентӳпе тренировка ушкăнĕсене 4944 çын çӳрет. Ку вăл районта пурăнакан 6 çултан пуçласа 60 çула çитичченхи ӳсĕмри çынсен йышĕн 28,4 процент чухлĕ. Районăн пĕрлештернĕ командисем спортăн 16 тĕсĕпе Пĕтĕм Раççейри тата республикăри 57 ăмăртăва хутшăннă.

Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн спортсменĕсем Нина Охотникова, Дима Григорьев, Сергей Черкашин, Андрей Тимофеев, Александр Никитин, Станислав Филиппов уйрăмах пысăк çитĕнӳсем турĕç. В.Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсенчен Татьяна Моисеева пĕр хутчен çеç мар биатлонпа тĕнче кубокĕн призерĕ пулса тăчĕ.

**– Юлашки çулсенче культура ĕçĕнче те улшăнусем пулсах тăраççĕ. Мĕнлисем вĕсем?**

– Иртнĕ çул республикăра та, районта та культура мероприятийĕсем нумай иртрĕç. Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 2007 çул Ача çулталăкĕ пулчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ Патшалăх Канашне «Вăхăта хакламалла, çынсемшĕн ĕçлемелле» çырăвĕпе тухрĕ.

Районта иртнĕ çул ирттернĕ пĕтĕм мероприяти ялти культурăна çĕклеме, çынсене культура пурнăçне ытларах явăçтарма пулăшрĕ.

Иртнĕ çул районта 14 моделлĕ библиотека уçăлчĕ. Паян районта паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерекен 30 информаци центрĕ ĕçлет. Ялти моделлĕ библиотекăсен сетьне туса хуни районта пурăнакансене пахалăхлă информаци пулăшăвĕ парассин шайне çĕклеме май пачĕ. 11 «халăх коллективĕ» çак числă ята çирĕплетсе хăварчĕ. Эпир «Шуракăш» юрăпа ташă ансамблĕпе (ертӳçи Владимир Александров ), «Картина» вокалпа эстрада ансамблĕпе (ертӳçи Илья Зайцев), «Расна» тата «Екрем» фолькльор ансамблĕсемпе (ертӳçисем Владимир Ильдяков тата Виталий Романов) чăннипех мухтанатпăр.

2007 çулта хамăр ентешсен икĕ кĕнекине презентацилерĕмĕр. Вĕсем Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, йывăçран эрешсем кас-са ăсталакан Петр Яковлевич Мазуркин «Чăвашсен йывăç эрешĕсем» тата художник, публицист Николай Лукич Яковлев «Художникăн тумхахлă çулĕ» кĕнекисем.

Республикăри «Русь мастеровая» конкурсра Петр Мазуркин 1 степень диплома, Ирина Егорова 2 степень диплома тивĕçрĕç. Шупашкарта иртнĕ ал вĕççĕн паянхи çемçе теттесене тăвакансен регионсем хушшинчи иккĕмĕш курав-конкурсра ачасен «Хĕвелçаврăнăш» пултарулăх пĕрлешĕвĕн ертӳçи Маргарита Николаевна Пушкарева 1 степень диплома тивĕçрĕ.

2007 çулта Чăваш Республикин Президенчĕ «Ялсенчи культура çурчĕсене аталантармалли мерăсем çинчен» Указ кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн 2010 çулччен районта 16 база центрне туса хумалла. Вĕсенче паянхи пурнăç ыйтакан сасă тата çутă техника оборудованийĕсем пулмалла. Кăçал Кашмашри моделлĕ Культура çуртне уçма палăртатпăр.

Районти историпе краеведени музейĕнче тури чăвашсен тумтирĕсен «Тĕрĕ эрешĕнчи тăван кĕвĕсем» çĕнĕ зал тăвас ĕç пырать. Çавăн пекех кăçал Муркаш районĕн паллă çыннисем çинчен калакан «Муркаш çĕрĕн историйĕ чĕрех» курав уçăлмалла.

**– Районта ватă çынсене, социаллă пулăшу кирлĕ çемьесене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Иртнĕ çул ку енĕпе мĕнле ĕçсем туса ирттернĕ?**

– Халăха социаллă пулăшу парассине илес пулсан, иртнĕ çул тĕп задача сахал тупăшлă çемьесене адреслă пулăшу парасси, инвалидсене, йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ ватă çынсене пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу парас тĕллевпе ыр кăмăллăх акцийĕсем ирттересси пулчĕ.

Район администрацийĕ ветерансен, çемьесемпе ачасен ыйтăвĕсене пĕрре те куçран вĕçертмест. 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 10762 пенсионер шутланать. Çав шутран Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе ветеранĕсем 168-ăн, тыл ĕçченĕсем 2357-ĕн, 5198 çын «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ. Районта ватăсемпе инвалидсене вăхăтлăх пурăнмалли 2 уйрăм. Вĕсенче 29 çын пурăнать. Федераллă саккунсене пурнăçа кĕртнĕ май тĕрлĕ çăмăллăхсемпе пособисене 48334,5 пин тенкĕлĕх панă. Уйрăмах Мăн Сĕнтĕрти ветерансен çурчĕн заведующине Людмила Геннадьевна Каргинана тав тăвас килет. Вăл 2007 çулта республикăри «Чи лайăх социаллă ĕçчен» конкурс çĕнтерӳçи пулса тăчĕ. Çавăн пекех Кашмашри Зоя Семеновна Охотникова, Çатракассинчи Галина Александровна Никитина нумай çул пĕччен ватăсене пăхса пурăнаççĕ. Чĕререн тав сире ырă ĕçшĕн.

Район администрацийĕ район территорийĕнче вырнаçнă федераллă тата республика структурисемпе тачă çыхăнса ĕçлесе пырать. Республикăри професси ăсталăхĕн конкурсĕнче «Профессипе чи пултарулли» ята республикăри район сучĕсем хушшинче Муркаш район сучĕн председателĕ Эльза Леонидовна Тарасова тивĕçрĕ.

Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕ (ертӳçи – Евгений Дмитриевич Макаров) граждансене хӳтĕлес, право йĕркипе обществăна тивĕçтерессипе нумай ĕçсем туса ирттерет. Юстици майорĕсене Елена Владимировна Кругловăна, Валерий Петрович Леонтьева, милици капитанĕсене Марина Анатольевна Конузинана, Сергей Анатольевич Иванова тав сăмахĕ калатăп. Чечен Республикинче служба тăнă Евгений Иванович Плечова, Валерий Геннадьевич Яковлева, Валерий Петрович Петрова, Михаил Мефодьевич Мясникова, Алексей Владимирович Лаптева, Виталий Михайлович Семенова, Григорий Ильич Христофорова уйрăм тав сăмахĕ калас килет.Вĕсем Тăван çĕршывăмăр умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçласа, Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин наградисене тивĕçрĕç.

2008 çула Ырă ĕçсен çулталăкĕ тени тепĕр хут çакна кăтартса парать: общество йĕркелĕхĕшĕн патшалăх кăна мар, граждансен те тăрăшмалла. Чăваш халăхĕн ĕлĕкрен пыракан ырă йăла – ниме пур: çынсем пĕр-пĕрне пысăк ĕçсем тума пулăшаççĕ. Общество проблемисене пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, килĕштерсе ĕçлесен çеç татса пама пулать – акă мĕн çинчен калать çакă. Пирĕнтен кашниех ырă ĕçсем тума ăнтăлтăр, пулăшу кирлисене пулăштăр. Çак туйăм кашнин чун-чĕринче пулмалла: вăл миçе çулта пулнине пăхмасăр, социаллă статуса пăхмасăр. Сире пурне те кашни кунах ырă ĕçсем тума чĕнсе калатăп. Пирĕн пурнăçра мир тата юрату çĕнтертĕр.

**– Кăçалхи задачăсем тата вĕсене пурнăçламалли çул-йĕрсем, мĕнлисем вĕсем?**

– 2008 çул пирĕн районшăн уйрăмах асра юлĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн кăçал пирĕн районта Республика кунĕ иртет. Ку пирĕншĕн пысăк чыс. Çав вăхăтрах пысăк яваплăх та. Пирĕн пата Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенчен, ют çĕршывсенчен те хăнасем килĕç. Çавăн чухлĕ йышлă тата сумлă хăнасене республикăн сăн-сăпатне шăпах пирĕн кăтартмалла тесе йышăнчĕç пулсан, республика пире шанать, пирĕн ку таранччен тунă ĕçсене хаклать. Апла пулсассăн пирĕн тивĕç – шанăçа тӳрре кăлармалла, питĕ нумай ĕç туса ирттермелле. Малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хурар. Вара Республика кунне те тивĕçлĕ шайра ирттерĕпĕр, умри задачăсене те пурнăçлăпăр.

Районăн социаллă-экономика аталанăвĕ куç умĕнчех. Чăваш Республикин Президенчĕ тата Правительстви пулăшнипе, район администрацийĕ депутатсен корпусĕпе, предприятисемпе организацисен ертӳçисемпе, огбщественнăй формированисемпе пĕрле килĕштерсе ĕçленипе çак çитĕнӳсене тума пултартăмăр. Нумай ыйтусене Шупашкар хула администрацийĕпе тата кӳршĕ районсемпе пĕрле килĕштерсе татса паратпăр. Нумай ĕçре пире хамăр ентешсем пулăшса пыраççĕ. Вĕсем республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăй хураççĕ.

2008 çул районта пурăнакан кашни çыншăн иртнĕ çулхинчен тата та ăнăçлăрах пулмалла. Кăçалхи бюджета йышăннă ĕнтĕ, пур енĕпе те пурнăçламалли ĕçсене палăртнă. Çав задачăсене пурнăçлама пирĕн акă мĕн тумалла:

- çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртсе çур акине ăнăçлă ирттермелле, районти ял хуçалăх предприятийĕсене çĕнĕ шая кăлармалла.
- кадр ыйтăвĕсене татса памалла.
- дисциплинăна çирĕплетмелле.
- ĕç укçине ӳстермелле.
- наци проекчĕсемпе килĕшӳллĕн инвестицисемпе усă курмалла.
- пысăк пахалăхлă çĕнĕ продукцисем кăлармалла.
- предпринимательствăна аталантармалла.
- халăхăн ĕççĕрлĕх проблемине татса памалла.
- çул хĕрринчи сервиса йĕркелесе çитермелле.
- район халăхне тата та ытларах пулăшу парас тĕллевпе çĕнĕ объектсем тумалла.
- районти демографи лару-тăрăвне лайăхлатмалла.
- ял тăрăхĕсен ĕçне татах та лайăхлатмалла, вĕсен ветерансен, çамрăксен, хĕрарăмсен организацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлемелле.

***Районăн хисеплĕ ĕçченĕсем! Сире пурне те пархатарлă ĕçсемшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Пурне те çирĕп сывлăх, телей, ĕçре ăнăçу, тату пурнăç сунатăп. Çемйĕрсенче килĕшӳпе юрату сĕнетĕп.***

**–Тавах, Юрий Александрович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

## Ылтăн туй

### *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă юратнă аннепе аттене, асаннепе асаттене, кукамипе кукаçине – Елача ялĕнче пурăнакан **Вера Ивановнапа Никита Михайлович ДАНИЛОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн пуç тайса, хисеплесе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Сире эпир ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕ, кинĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, 10 мăнукĕ, тăванĕсем.**



Юратнă аттепе аннене – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Вера Николаевнапа Владимир Александрович СЕРГЕЕВСЕНЕ** пĕр çемье чăмăртаса пĕрле пурăнма пуçланăранпа февралĕн 11-мĕшĕнче 50 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх, чун ăшши. Эпир сире ылтăн туй ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр, татах та нумай çулсем пирĕнпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр, аттепе анне пурăнсассăн пирĕн пурнăç тулăхрах та ырăрах.

**Пĕтĕм чун-чĕререн саламлаканĕсем: икĕ хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, ывăлĕпе кинĕ, ултă мăнукĕ, тăватă прамăнукĕ, тăванĕсем.**